# СĂВАПЛĂ ПАВЕЛ АПОСТОЛ ТИМОФЕЙ ПАТНЕ ЯНĂ ИККĔМĔШ ÇЫРУ

**1-мĕш сыпăк**

*Саламлани*

[1] Турă ирĕкĕпе Иисус Христос апостолĕ пулма тивĕçнĕ, Хрис-
тос Иисус урлă ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулма шанчăк илнĕ Павел-
ран – [2] ĕненӳри савнă ывăлăма Тимофея. Атте Турăпа Иисус
Христос Хуçамăртан сана ырăлăх, тивлет, канăçлăх пултăр.

*Ырă Хыпара чунтан парăнни*

[3] Эпĕ Турăшăн мăн асаттемĕрсем пекех таса чунпа ĕçлесе тăра-
тăп. Хамăн кĕллĕмре эпĕ сана çине-çинех, ирĕн-каçăн асилетĕп,
саншăн Турра тав тăватăп. [4] Эсĕ маншăн куççуль тăкнине асиле-
тĕп те – сана курассăм килет. Курса чун-чĕререн савăнăттăмччĕ.
[5] Эсĕ чунтан ĕненнине те асилетĕп. Лоида асаннӳ те, Евника
аннӳ те çавнашкалах ĕненетчĕç. Çав ĕненӳ санра пуррине шана-
тăп. [6] Çавăнпа та асту, Турă панă пултарулăха сӳнме ан пар; çав
пултарулăха эпĕ сана алă хурсах парсаттăм. [7] Турă пире хăрав
сывлăшне паман-çке-ха. Вăл пире хăватлă, юратуллă, таса ăслă
сывлăш панă. [8] Эппин Иисус Христос Хуçамăр çинчен çирĕп-
летсе пĕлтермешкĕн ан вăтан. Манран та, Уншăн тĕрмере лара-
канскертен, ан имен. Христос çинчен Ырă Хыпар пĕлтернĕшĕн
асап курасран ан хăра, мĕншĕн тесен Турă пире вăй парсах тă-
рать. [9] Турă пире ĕçĕмĕрсене кура мар, Хăйĕн шухăш-кăмăлĕпе,
ырăлăхĕпе çăлнă, Хăйĕн халăхĕ пулма чĕнсе илнĕ. Вăл пире çав

ырӑлӑха Иисус Христос урлӑ ӗмӗрсем пуҫланиччченех пама пул-
нӑ. [10]Анчах та пама пулни халӗ тин, Ҫӑлаканӑмӑр Иисус Хрис-
тос килсессӗн, палӑрнӑ. Вӑл вилӗме тӗп тунӑ, Ырӑ Хыпар урлӑ
тӗнчене ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ илсе килнӗ. [11]Ҫав Ырӑ Хыпара пӗл-
термешкӗн мана ӳкӗтлевҫӗ тата апостол, ытти халӑхсен вӗрентӳ-
ҫи тунӑ. [12]Асапӑм та манӑн ҫав сӑлтава пула, анчах та эпӗ вӑтан-
мастӑп. Мӗншӗн тесен эпӗ Кама ӗненнине пӗлетӗп, ҫав юлашки
кун ҫитиччен Вӑл Хӑй мана шантарнине те вӑйра хӑварасса пӗ-
летӗп. [13]Ху манран илтнӗ чӑн-чӑн вӗрентӗве тӗслӗх вырӑнне хур-
са Иисус Христос панӑ ӗненӳпе тата юратулӑхпа пурӑн. [14]Хӑв-
на Турӑ шанса панӑ ыррине ӑшӑмӑрти Святой Сывлӑш пулӑш-
нипе упра.

[15]Асирисем пурте, ҫав шутрах Фигелпа Ермоген та, мана пӑ-
рахнине эсӗ пӗлетӗн ӗнтӗ. [16]Онисифор кил-йышне Хуҫамӑр
ырӑлӑх патӑрах. Эпӗ тӗрмере ларнинчен вӑтанмасӑрах Онисифор
мана хавхалантарсах тӑчӗ. [17]Унтан та ытларах, хӑй Римра чухне
вӑл мана шыраса тупма пултарчӗ. [18]Ҫав юлашки кун ҫитсен Ху-
ҫамӑр ӑна Хӑйӗн ырӑлӑхне курмалла тутӑрах. Ефесра вӑл мана
мӗн тери пулӑшнине эсӗ хӑвах лайӑх пӗлетӗн.

## 2-мӗш сыпӑк

*Иисус Христосӑн шанчӑклӑ салтакӗ*

[1]Ҫапла вара, ывӑлӑм, Христос Иисусри ырӑлӑхпа тӗреклен.
[2]Эпӗ сана нумай ҫын умӗнче вӗрентсе каланӑччӗ. Эсӗ ҫавна
шанчӑклӑ, ыттисене ӳкӗтлеме пултаракан ҫынсене вӗрент. [3]Ӗн-
тӗ Иисус Христосӑн шанчӑклӑ салтакӗ пек пулса хӗн-хура тӳс.
[4]Нимӗнле ҫар ҫынни те пурӑнӑҫри вак-тӗвек ӗҫсемпе аппалан-
масть. Ун пек вӑл пуҫлӑхне юраймӗ. [5]Ӑмӑртӑва хутшӑнакан та,
йӗркене пӑсса ӑмӑртсан, ҫӗнтерӳҫӗ пуҫ кӑшӑлне нихӑҫан та тивӗҫ
пулаймӗ. [6]Тертленсе тырӑ-пулӑ ӳстернӗ ҫӗр ӗҫченӗ те хӑйӗн пай-
не чи малтан илме тивӗҫ. [7]Эпӗ мӗн калани пирки тӗплӗн шу-
хӑшла. Хуҫамӑр сана йӑлтах ӑнланмалла тутӑрах.

[8]Вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ Иисус Христос Хуҫамӑра, Давид
йӑхӗнчен тухнӑскере, яланах асра тыт. Эпӗ пӗлтерекен Ырӑ Хы-
пар – Ун ҫинчен. [9]Вӑрӑ-хураха сӑнчӑрланӑ пек, мана Ырӑ Хыпар
пӗлтернӗшӗн сӑнчӑрларӗҫ. Анчах та Турӑ сӑмахне сӑнчӑрлай-
мӑн. [10]Ҫавӑнпа, суйласа илнисем те Иисус Христоспа пӗрлӗхлӗ

пулса ҫӑлӑнӑҫ тата ӗмӗрлӗх мухтав илччӗр тесе, эпӗ вӗсемшӗн
тем тӳсме те хатӗр. [11] Ҫак сӑмахсем чӑн: эпир Унпа пӗрле вил-
нӗ пулсан, Унпа пӗрлех чӗрӗлӗхлӗ пулӑпӑр. [12] Эпир тӳсетпӗр
пулсан, Унпа пӗрлех патшара ларӑпӑр. Эпир Унран тунсан,
Вӑл та пирӗнтен тунӗ. [13] Эпир шанчӑклӑ пулмасан та, Вӑл яла-
нах шанчӑклӑ, мӗншӗн тесен Вӑл Хӑйӗнчен Хӑй тунма пулта-
раймасть.

### *Ырӑ ята тивӗҫнӗ ӗҫчен*

[14] Ҫынсене ҫакна асилтерсех тӑр: вӗсем хӗрӳ тавлашусене ан
хутшӑнччӑр тесе Хуҫа Турӑ ячӗпе тархасла. Унашкал тавлашу-
сем итлекенсене усӑ мар, сиен кӑна кӳреҫҫӗ. [15] Турӑ умӗнче ырӑ
ята тивӗҫмешкӗн тӑрӑш; пӗр кӑлтӑксӑр ӗҫчен пек, чӑнлӑх сӑ-
махне тӗрӗс вӗрент. [16] Юрӑхсӑр, пуш калаҫусенчен пӑрӑн, мӗн-
шӗн тесен пуш сӑмах вӗҫтерекенсем сӳпӗлтете-сӳпӗлтете Турра
хисеплеми пулсах пырӗҫ. [17] Вӗсен сӑмахӗ рак чирӗ пек сарӑлӗ.
Именейпе Филит та ҫавнашкалах [18] чӑнлӑхран пӑрӑнса кайнӑ.
Вӗсем, вилӗмрен чӗрӗлсе тӑрасси пулса иртнӗ ӗнтӗ тесе, хӑ-
шӗ-пӗрисен ӗненӗвне пӑсаҫҫӗ. [19] Анчах та Турӑ хывнӑ никӗс ҫи-
рӗппипех; унта ҫапла ҫырнӑ: «Хуҫа Турӑ Хӑйӗннисене пӗлет».
Тата ҫапла ҫырнӑ: «Хуҫа Турӑ ятне асӑнакан кирек кам та йӗр-
кесӗрлӗхрен пӑрӑнтӑр». [20] Пысӑк кил-ҫуртра вара ылтӑн-кӗмӗл
савӑт кӑна мар, йывӑҫпа тӑм савӑт та пур. Пӗрисемпе чаплӑ
лару-тӑрура усӑ кураҫҫӗ, теприсемпе – кулленхи пурӑнӑҫра.
[21] Ҫапла вара, йӗркесӗрлӗхрен тасатнӑ ҫын чаплӑ савӑт евӗр.
Вӑл – Хуҫине юрӑхлӑ, сӑвапласа тасатнӑ, тӗрлӗрен ырӑ ӗҫре усӑ
курмалли хатӗр. [22] Яш ӗмӗрӗн ҫылӑхлӑ шухӑшӗсенчен тар. Хуҫа
Турӑ ятне таса чун-чӗрепе асӑнакансемпе пӗрле эсӗ тӳрӗлӗх,
ӗненӳ, юратулӑх, канӑҫлӑх патне ӑнтӑл. [23] Ӑссӑр та айван тавла-
шусене ан хутшӑн: вӗсем хирӗҫӳ кӑларнине эсӗ хӑвах пӗлетӗн.
[24] Хуҫа Турӑ чурин хирӗҫмелле мар, пуринпе те сӑпайлӑ пул-
малла, ӳкӗтлеме пӗлмелле, ҫилӗ тытмалла мар. [25-26] Хӑйне хи-
рӗҫлекенсене те унӑн йӑвашшӑн ӳкӗте кӗртмелле. Шуйттан вӗ-
сене хӑй танатине лектернӗ, хӑйне пӑхӑнтарнӑ. Ҫав танатаран
хӑтарасчӗ тесе, чӑнлӑха пӗлмешкӗн Турӑ вӗсене ӳкӗнтерессе
шанса вӗрентмелле.

### 3-мӗш сыпӑк

*Юлашки вӑхӑтсенче*

1 Ҫакна пӗлсе тӑр: юлашки кунсенче йывӑр вӑхӑтсем ҫитӗҫ.
2 Мӗншӗн тесен ҫынсем хӑйсене тата укҫана кӑна юратӗҫ. Вӗсем
мӑнкӑмӑллӑ, мухтанчӑк, усал чӗлхеллӗ пулӗҫ; ашшӗ-амӑшне ит-
леме пӑрахӗҫ. Вӗсем тав тума та, ҫынна юратма та, Турра хисеп-
леме те пӗлмӗҫ. 3 Ун чухне ҫынсем каҫарма пӗлми, элекҫӗ, хӑйсе-
не чарайми, хаяр, ыррине курайми пулӗҫ. 4 Вӗсем сутӑнчӑк, сӗм-
сӗр, каппайчӑк пулӗҫ; Турра юратас вырӑнне киленсе пурӑнма
юратӗҫ. 5 Вӗсем Турра хисепленҫи тӑвӗҫ, анчах та ӑшра хисепле-
мӗҫ. Эсӗ вӗсемпе ан ҫыхлан. 6 Унашкаллисем ют кил-йыша йӑп-
шӑнса кӗрсе каяҫҫӗ те ҫӑмӑлттай хӗрарӑмсен ӑс-хакӑлне тыткӑн-
лаҫҫӗ. Ҫылӑх ӑшне путнӑ хӗрарӑмӗсем те тӑрлавсӑр кӑмӑлӗсем
хыҫҫӑн каяҫҫӗ. 7 Вӗсем ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ вӗрентӳсем хыҫҫӑн хӑва-
ласа чӑнлӑх мӗнне пӗлеймесӗрех юлаҫҫӗ. 8 Ианнийпе Иамврий
Моисея епле хирӗҫленӗ, ҫав суя вӗрентӳҫӗсем те ҫаплах чӑнлӑха
хирӗҫ тӑраҫҫӗ. Вӗсем пӑсӑк ӑслӑ, чӑн ӗненӳ мӗнне те пӗлмеҫҫӗ.
9 Анчах та вӗсем инҫех каяймӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсен ӑссӑрлӑхӗ,
лешсенни пекех, пӗтӗм халӑх умӗнче палӑрӗ.

*Тимофея юлашкинчен вӗрентсе калани*

10-11 Ӳкӗтӗм, пурӑнӑҫӑм, тӗллевӗм, ӗненӗвӗм, чӑтӑмлӑхӑм, юра-
тулӑхӑм, ҫирӗплӗхӗм, терт-асапӑм — ҫаксем пурте саншӑн тӗслӗх.
Антиохипе Иконире тата Листрӑра мана ӗненӳшӗн мӗнле хӗн-хур,
терт-асап кӑтартнине эсӗ пӗлетӗн. Ҫав хӗн-хура эпӗ тӳссе ирттер-
тӗм. Хуҫа Турӑ мана хӑтарса хӑварчӗ. 12 Тепӗр тесен, Турра хи-
сеплесе, Христос Иисуспа пӗрлӗхлӗ пулса пурӑнас текенсене пур-
не те хӗсӗрлӗҫ. 13 Усал ҫынсемпе ултавҫӑсем вара, улталаса та улта-
ланса, тата усалтарах ӗҫсем тӑвӗҫ. 14 Эсӗ хӑвна мӗне вӗрентнине,
мӗн шанса панине ҫирӗп тытса пыр. Хӑвӑн вӗрентекенӳсене вара
эсӗ аван пӗлетӗн. 15 Ҫитменнине, эсӗ ачаранах Таса Ҫырнине пӗл-
се ҫитӗннӗ. Ҫырнинче мӗн калани сана Христос Иисуса ӗненсе
ҫӑлӑнӑҫ тупмашкӑн ӑслӑлӑх парать. 16-17 Турӑ чурине чунпа аталан-
са ҫитмешкӗн, ырӑ ӗҫ тума хатӗр пулмашкӑн Ҫырни пур. Ӑна
Турӑ Сывлӑшӗн витӗмӗпе ҫырнӑ. Ҫырни вӗрентме те, питлеме те,
тӗрӗс ҫул ҫине кӑларма та, тӳрӗ пурӑнмашкӑн ӳкӗтлеме те усӑллӑ.

## 4-мӗш сыпӑк

1 Иисус, тепре килсессӗн, Унӑн Патшалӑхӗ ҫитсессӗн, чӗрри-
сене те, вилнисене те суд тӑвӗ. Турӑпа Иисус Христос Хуҫамӑр
ячӗпе тархасласа сана ҫакна калатӑп: 2 Турӑ сӑмахне кирек хӑ-
ҫан та ҫине тӑрса вӗрент, кирлӗ чухне ҫынсене питле, чар, пӗтӗм
чӑтӑмлӑхупа ӑс парса ӳкӗтле. 3 Вӑхӑт ҫитсессӗн ҫынсем чӑн вӗ-
рентнине итлес темӗҫ. Хӑйсен кӑмӑлне тивӗҫтермешкӗн вӗсем
йӑпӑлтатакан, хитре калаҫакан вӗрентекенсене суйлӗҫ. 4 Юмах
юптарнине юратса, тӗрӗс сӑмахран пӑрӑнӗҫ. 5 Эсӗ вара пур тӗ-
лӗшӗнчен те тимлӗ пул, хӗн-хура тӳс, Ырӑ Хыпар сар, хӑвӑн
тивӗҫе пурнӑҫла.

6 Ӗнтӗ манӑн ку тӗнчерен каяс вӑхӑтсем ҫитрӗҫ, пурӑнӑҫӑма
Турра кӳмешкӗн парне вырӑнӗ ҫине хучӗҫ. 7 Паттӑррӑн кӗреш-
рӗм, пурӑнӑҫ ҫулне вӗҫлерӗм, ӗненӗве упраса хӑвартӑм. 8 Халӗ
ман валли ҫӗнтерӳҫӗн тӳрӗлӗх пуҫ кӑшӑлне хатӗрлеҫҫӗ. Ҫав
юлашки кун ҫитсен тӳрӗ суд тӑвакан Хуҫамӑр мана ӑна тӑхӑнтар-
тӗ. Пуҫ кӑшӑлне Вӑл мана кӑна мар, Хӑй тепре килессе савӑнса
кӗтекенсене пурне те парӗ.

*Уйрӑм хушусем*

9 Эсӗ ман пата хӑвӑртрах ҫитме тӑрӑш, 10 мӗншӗн тесен Димас
мана пӑрахрӗ. Ку тӗнчери пурӑнӑҫа ытларах килӗштерсе вӑл Фес-
салоникӑна кайрӗ. Крискент Галатине тухса кайрӗ, Тит – Далма-
тине. Манпа пӗр Лука ҫеҫ юлчӗ. 11 Мана пулӑшакан кирлӗ, ҫавӑн-
па Марка хӑвпа пӗрле илсе кил. 12 Тихика эпӗ Ефеса ятӑм. 13 Эпӗ
Троадӑра Карп патӗнче ҫиелти тумтирӗме хӑварнӑччӗ, килнӗ чух-
не ҫавна илсе кил. Тата унтан манӑн кӗнекесене, уйрӑмах тир ҫи-
не ҫырнисене, илсе кил. 14 Пӑхӑр ӑсти Александр мана нумай усал
турӗ. Хуҫа Турӑ ӑна ӗҫӗсене кура тавӑрса патӑрах! 15 Эсӗ те унран
асӑрхан, мӗншӗн тесен вӑл пирӗн вӗрентӗве питӗ хирӗҫчӗ.

16 Эпӗ судра малтанхи хут хӳтӗленсе калаҫнӑ чухне мана
хавхалантарма никам та пымарӗ, пурте мана пӑрахрӗҫ. Ҫавӑ
вӗсен ҫылӑхӗ шутне ан кӗтӗрччӗ! 17 Ырӑ Хыпара манӑн пӗлтер-
се ҫитермелле пултӑр тесе, ытти халӑхсем пурте ҫавна илтме
пултарччӑр тесе, мана Хуҫа Турӑ пӑрахмарӗ, вӑй пачӗ. Ҫапла
вара эпӗ хама арӑслансене пӑрахса парасран хӑтӑлса юлтӑм.

18 Хуҫа Турă мана усал-тĕселтен хăтартăр, Хăйĕн Ҫӳлти Пат-
шалăхне тĕрĕс-тĕкел илсе кĕтĕр. Ăна ĕмĕр-ĕмĕр мухтав пул-
тăр! Аминь.

*Ҫыру вĕҫĕнчи саламсем*

19 Прискиллăпа Акилăна тата Онисифор кил-йышне салам ка-
ла. 20 Ераст Коринфрах юлчĕ, чирлĕ Трофима вара эпĕ Милитра
хăвартăм. 21 Хĕл лариччен килме тăрăш. Сана Еввул та, Пуд та,
Лин та, Клавдия та, ытти ĕненекен тăвансем те салам яраҫҫĕ.
22 Иисус Христос Хуҫамăр санăн чун-чĕмӳпе пĕрле пултăр! Сире
пурне те Турă ырăлăхĕ пултăр! Аминь.